Çу уйăхĕ 18, 2023
www.tavanen.ru
Таван Ен
№ 19 (11163-11164)



# Кăвак берет хăюллă та хастар пулма хистет

Проект ЧР Цифра министерстви пулăшнипе пурнăçланать

**«Кăвак беретсем», «çунатлă пехота», «пирĕнсĕр пуçне никам та»... Сывлăшпа десант çарĕнче пулнă хăюллă та хастар, шанчăклă та салтак тивĕçне тÿрĕ кăмăлпа пурнăçланă арçынсем пирки çакăн пек калаççĕ.**



Кÿкеçре пурăнакан Александр Кузьмин хăй вăхăтĕнче çĕршыв умĕнчи тивĕçне пурнăçлама сывлăшпа десант çарĕн ретне тăнă. Салтак тивĕçне татнăскер иккĕмĕш Чечен вăрçине те лекнĕ.

Александр Кузьмин – саппасри аслă лейтенант. 1970 çулхи юпа уйăхĕн 31-мĕшĕнче Йĕпреç районне кĕрекен Анатри Кĕлешкассинче çуралнă. Унта нумай пурăнман çемье, Пермь облаçĕнчи Красновишерски районне кĕрекен Вишерогорск поселокĕнче тĕпленнĕ. 1988 çулта Александр вырăнти шкултан вĕренсе тухнă. Унтан ашшĕ-амăшĕпе Чăваш Ене, тăван тăрăха таврăннă. Амăшĕ унăн Донецк облаçĕнчен. «Атте Украинăра служба ирттернĕ чухне аннепе паллашнă та Чăваш Ене илсе килнĕ», – ăнлантарчĕ саппасри аслă лейтенант. 1989 çулта Александр Николаевичăн салтак атти тăхăнма вăхăт çитет, службăна вăл сывлăшпа десант çарĕсенче иртерет, малтанах Александр Николаевич парашютпа виçĕ хут сикнĕ, виççĕмĕш разряда тивĕçнĕ. Çур çул Литвара вĕреннĕ, БМД-1 çар машинин командирĕн званине илнĕ. Унтан çулталăк çурă 98-мĕш гварди сывлăшпа десант дивизийĕнче службăра тăнă, вĕсен полкĕ Кишинев хулинче вырнаçнă пулнă. Салтакран Александр Кузьмин 1991 çулта аслă сержант званийĕпе таврăнать. Пĕр вăхăт Трактор заводĕнче ĕçленĕ. Унтан укçа ĕçлесе илес тĕллевпе çарта службăна малалла тăснă.

### ИККĔМĔШ ЧЕЧЕН ВĂРÇИ

1997 çулта вăл виçĕ çуллăх контракт çырать, аслă сержант званийĕпе çар тивĕçне пурнăçлать. «Бронетранспортерсем çинчи оперативлă назначени батальонĕнче эпĕ АГС-17 взводĕн командирĕн çумĕнче тăтăм. Пирĕн патра васкавлă служба тухакансем те пулчĕç, кашни ротăра 100 çын, салтаксене АГС-17 гранатометпа пеме вĕрентрĕм. 1998 çулта пĕрремĕш командировкăра пултăм. Эпир Дагестана, Кизляр хулине, аэропорт заставине сыхлама тухса кайрăмăр. Икĕ уйăхлăха палăртнă командировка вăраха тăсăлса кайрĕ. Пуш уйăхĕн вĕçĕнче – ака уйăхĕн пуçламăшĕнче тухса кайнăскерсем каялла çурла уйăхĕнче тин таврăнтăмăр. Хăрушă пулнă, палаткăсенче пурăннă... 1998 çул вĕçĕнче пирĕн оперативлă батальонран ятарлă мотеризациленĕ чаç туса хучĕç, пире милиционерсен тумне тăхăнтартрĕç, Шупашкарта общество йĕркине хураллană. 1999 çулхи çурла уйăхĕнче иккĕмĕш Чечен вăрçи пуçланчĕ, çав çулах декабрь уйăхĕнче пирĕн çара Гудермес хулине çурçĕр хĕррине ячĕç, пилĕк батальонран пĕрлештернĕ полкра пирĕн Шупашкар батальонĕ те пулнă», – каласа парĕ вăл.

1999-2002 çулсенче Александр Николаевич пурĕ 4-5 уйăха тăсăлнă 4 командировкăра пулнă. «Омоновецсем техникăсене тĕрĕслеççĕ, эпир тĕрĕслев иртнĕ вăхăтра сыхласа тăнă, çĕрпÿртсенче пурăннă. Пире тăшман темиçе хут та пенĕ, тем те тÿссе иртнĕ. Салтаксене вĕрентнĕ, ориентировка панă. Çавăн пекех хам та АГС-17 гранатометран пенĕ, блокпостсем тăрăх çÿренĕ», – аса илчĕ вăл.

Çурçĕр Кавказри хирĕçтăрусене хутшăннă ветерансен союзĕнче тăракансем – Шупашкар районĕнчен, Шупашкартан пĕрле çар тивĕçне пурнăçланă юлташсем яланах тĕл пулма тăрăшаççĕ. «Çулсеренех эпир Çĕнтерÿ кунĕнче парада хутшăнатпăр, çавăн пекех утă уйăхĕн 1-мĕшĕнче Çар юхăмĕн ветеранĕсен кунĕнче пĕрле пуçтаранатпăр. Тăван çĕршыв хÿтĕлевçин кунĕнче шкулсене мероприятисене йыхравлаççĕ. Утă уйăхĕн 1-мĕшĕнче кашни çулах Мухтав монуменчĕ патне чечексем хуратпăр, Чечен вăрçинче пуç хунă юлташсене асăнатпăр, ĕлĕкхине аса илетпĕр», – пĕлтерчĕ Александр Николаевич.

«2002 çулхи юлашки командировкăра эпĕ взвод командирĕн тивĕçĕсене вăхăтлăха пурнăçларăм. Офицерсем çитмеççĕ, мана Раççейĕн Шалти ĕçсен министерствин шалти çарсен Çурçĕр Кавказри çар институтне вĕренме кайма сĕнчĕç, унта çур çул – 2002 çулхи юпа уйăхĕнчен пуçласа 2003 çулхи çу уйăхĕччен – вĕрентĕм. Экзаменсене лайăх тытрăм. Кĕçĕн лейтенант – взвод командирĕн званине илтĕм. Шупашкара таврăнтăм, взвод шанса пачĕç, офицер пулса тăтăм», – тăсрĕ калаçăва саппасри аслă лейтенант.

Малалла Александр Николаевич службăна хăйĕн çар чаçĕнче иртернĕ. «Пирĕн батальонран взвод турĕç, виçĕ ротăран пĕри юлчĕ, офицерсене чакарчĕç. Мана должнос сĕнчĕç, анчах ун чухне манăн хĕр çуралнăччĕ, çавăнпа эпĕ килĕшмерĕм. Икĕ çултан мана Кирова йыхравларĕç, пирĕн дивизин тĕп штабне ĕçлеме вырнаçрăм. Унтан Шупашкара куçрăм. Кунта шăпах 1-мĕш, 2-мĕш тата 3-мĕш патруль ротипе автомобильсем çинчи патруль ротине турĕç. 2010 çулта аслă лейтенант званийĕпе, рота командирĕн харпăр составпа ĕçлекен çумĕнчен ĕçрен тухрăм. Унтан тĕрлĕ хурал организацийĕсенче вăй хутăм», – каласа парĕ Александр Кузьмин.

Чечняра служба иртернĕ вăхăтра Александр Николаевич укçа пухса пынă, çапла Кÿкеçре икĕ пÿлĕмлĕ хваттер туяннă.

2019 çулхи юпа уйăхĕнчен пуçласа паянхи кунччен Александр Николаевич Шупашкар тата Сĕнтĕрвăрри районĕсен çар ĕç комиссариатĕнче мобилизаци енĕпе ĕçлекен уйрăмĕн ертÿçин пулăшуçинче вăй хурать. Терроризма хирĕç кĕрешессин, граждан оборонин, пушар хăрушсăрлăхĕн ĕçĕсене тата служба тивĕçне контрактпа пурнăçлама кăмăл тунисен наборне йĕркелет.

### 30 ÇУЛТАН ТЕПĔР ХУТ ПАРАШЮТПА СИКНĔ

Иртнĕ çулсене каялла çаврăнса пăхас пулсан та Александр Николаевич хăйĕн пурнăçне çар тивĕçĕпе çыхăнтарнишĕн пĕртте ÿкĕнмест. «Эпĕ Совет саманинче çитĕннĕ, пирĕн вăхăтра кашни яш салтакра пулнă. Çара кайман çын сывлăхĕ начарри ăнлантарнă, ун пеккисем çине хĕрсем те пăхман. Эпĕ сывлăшпа десант çарĕнче служба тухма ĕмĕтленнĕ, васкавлă служба вăхăтĕнче пурĕ 19 хут парашютпа сикнĕ. Пĕрле служба иртернисемпе мессенджерта ушкăн йĕркелерĕмĕр, пĕр-пĕрин патне çыру çÿрететпĕр. Парашютпа çирĕммĕш хут 30 çул иртсен, 2021 çулта, Сывлăшпа десант çарĕсен кунĕнче сикрĕм. Çамрăк вăхăтсене аса илтĕм, ку вăл калама çук пысăк туйăмсем: хăлхара çил шăхăрать, парашют куполĕ уçăлать, хăвăртлăх çеккунтра 25 метртан 5 метр чакать...» Александр Николаевич çавăн пекех парашютпа пĕрремĕш хут сикнине те аса илчĕ: «Паллах, хăранă, анчах парашюта уçмалли прибор мĕнле пулсан та ĕçлесе каяссине хама хам ĕнентертĕм, пурпĕрех çĕр çине анса ларасса шаннă», – терĕ вăл.

Александр Николаевич мăшăрĕпе икĕ ачана: ывăлпа хĕр ура çине тăратнă. Ывăлĕ – саппасри лейтенант, вăл Хусанти авиаци институтĕнчен вĕренсе тухнă. Хĕрĕ Ксения пĕлтĕр Шупашкарти экономикăпа технологи колледжĕ хыççăн Мускаври политехника университечĕн Шупашкарти филиалне кĕнĕ, халĕ Шупашкар муниципалитет округĕн администрацийĕнче ĕçлет.



### «ЫРĂ ĔÇ ТУСАН – КĂМĂЛ ÇĔКЛЕНЕТ...»

Александр Николаевич пурнăçра 5 правилăна пăхăнать: пĕрремĕшĕ – тĕрĕслĕх – нихăçан та улталамалла мар, тĕрĕссине каламалла, нимĕн те пытармалла мар... панă сăмаха тытман çынсене юратмасть пирĕн герой. Иккĕмĕшпе виççĕмĕшĕ – тĕллевсене пурнăçлама пĕлни тата çынсене пулăшма пултарни. «Сăмахран, кам та пулин манран çул ыйтсан яланах пулăшма тăрăшатăп. Май пур чухне мĕншĕн пулăшмалла мар-ха? Ырă ĕç тусан хăвăн та кăмăл çĕкленет», – хăйĕн шухăшне пĕлтерчĕ Александр Николаевич. Тăваттăмĕшĕ – патриотизм – Тăван çĕршыва юратни, уншăн кар! тăни. Пиллĕкмĕшĕ – хăв тĕллĕн йышăну тума пĕлни.

Александр Николаевич çапла шухăшлать: чăн-чăн гражданинăн, патриотăн Тăван çĕршыв умĕнчи тивĕçе пурнăçламаллах. Вăл хăйĕн пурнăçĕнчи тĕслĕхе те илсе пачĕ: «Çар комиссариатне службăна юрăхлă пулманнипе çар тивĕçне пурнăçламан çынсем килеççĕ. Халĕ, вăхăт иртсен, Тăван çĕршыв умĕнчи парăма татма хатĕррине пĕлтереççĕ. Кун пеккисене медкомисси витĕр кăларатпăр, çар службине юрăхлине палăртатпăр. Хăйсен ирĕкĕпе, никамран пытанмасăр çĕршыва хÿтĕлеме каякансене эпĕ хисеплетĕп», – вĕçлерĕ калаçăва вăл.

■ Юлия ИВАНОВА

● #ПĔРЛЕ

# Салтаксемшĕн пăшăрханса…

**Александр Егоров пенсионер ыр кăмăллăх фондне 100 пин тенкĕ куçарнă.**

«Телевизор пăхатăп. Артемовск хулинчи салтаксен шăпине пула канăçа çухатрăм», – тет Кÿкеçре пурăнакан Александр Егоров. Çавăнпа шухăшланă та вăл ятарлă çар операцине хутшăнакан паттăрсене май пур таран пулăшма.

«Хамăрăннисене пăрахмастпăр» Шупашкар районĕ» ыр кăмăллăх фончĕ Украина территорийĕнче çар тивĕçне пурнăçлакан пирĕн муниципалитет округĕн салтакĕсем валли гуманитари пулăшăвне темиçе хут та пухрĕ, ятарлă çар операци зонине автомашина та туянса ăсатрĕ. Сывăх вăхăтра вĕсем татах пулăшупа çула тухас шухăшлă, халĕ укçа-тенкĕ пухаççĕ, салтаксем ыйтнă список тăрăх тумтир, йăлара тата çарта усă курмалли хатĕр-хĕтĕр туянаççĕ. Александр Егорович вĕсене çак ĕçре пысăк пулăшу кÿчĕ – фонда 100 пин тенкĕ куçарчĕ. Пенсионер укçа-тенке пĕрремĕш хут куçармасть иккен, унчен çак ĕçре мăнукне пулăшма ыйтнă. «Сывлăх пулсассăн хамăрăннисене татах та пулăшас шухăшлă», – тет вăл.



А. Егоров салтак вăхăтĕнче

Александр Егоровичăн ашшĕ – Егор Степанович, вăрçа 1942 çулта тухса кайса хыпарсăр çухалнă, Игнатий куккăшĕ Волгоградра пуç хунă. «Çĕр улми çисе ÿснĕ, хăшпĕр чух купăста куркаланă. Уя ĕçлеме 5-6 çултах тухнă», – аса илчĕ вăрçă çулĕсене Александр Егорович. Çурçĕрте тăрăшнă вăл. 1959 çулта Чукоткăна комсомол путевкипе тухса кайнă та металлурги комбинатĕнче вăй хума пуçланă. «Предприяти направленийĕпе вĕренме кайма пулать тесе разнорядка çитрĕ, çапла вĕренме кĕтĕм», – терĕ Александр Егоров. Вăл Ленинградри ту институтĕнче ăс пухнă. Иккĕмĕш курсра унăн салтака кайма ят тухнă. Ĕç батальонне, сыхăну çарĕсене лекнĕ пирĕн герой, унта 3 çул – 1963-1966 çç. – тăнă. «Çар ĕç комиссариатне 15-16 çын çитрĕ. Çар ĕç комиссарĕ пĕр çын ылташшине, кăмăл тăвакан халĕ юлса тепĕр çул килме пултарасса пĕлтерчĕ, анчах та никам та юлас темерĕ. Ĕç батальонĕ-и, ĕç батальонĕ мар-и, пăхса тăман, çĕршыв умĕнчи тивĕçе пурнăçлама васканă», – каласа кăтартрĕ Александр Егоров. Вĕсен чаçĕ Иваново хулинче вырнаçнă пулнă, анчах та салтаксем час-часах командировкăсене тухса çÿренĕ, çавăнпа та Александр Егорович Хĕвеланăç Украинăра та службăра тăнă. Çав вăхăтрах кунти халăх вырăссене юратманнине курма тивнĕ унăн. «Йывăр ĕç пурнăçланă, сыхăну кабелĕсене çĕр айне хывнă. Анчах та службăпа кăмăллă, çар тивĕçне пĕр вăхăтра пурнăçланă командирсене тăтăшах аса илетĕп», – пĕлтерчĕ пенсионер.

Салтак хыççăн вĕренĕве малалла тăснă – йывăр пулсассăн та пăрахман, инженер-геолог профессине алла илнĕ.

■ Анна КАШАЕВА